# «Не бывает языков главных»

Эпĕ пĕчĕкренех тăван чăваш чĕлхипе туслă. Чăваш варĕнче ӳт илнĕ, унăн кăкăрне ĕмнĕ, чăваш чĕрçийĕ çинче утьăкка сикнĕ. Чăваш çĕрĕнче ураланнă, чăвашла вĕреннĕ, кулленхи пурнăçпа чуна, юна кĕнĕ те ĕнтĕ чăваш чĕлхи. Маншăн вăл сывлăш пекех. Халĕ мана чăвашла калаçма чарас пулсан эпĕ мĕн тунă пулăттăм-ши? Шухăшлама та харушă. Чаваш чĕлхипе литература урокĕсенче хама асамлă тĕнчене лекнĕнех туятăп. Чăваш самаххисене те тăрăшса, шăрçалантарса çырас килет. Вĕсенче темле асамлă, хăй патне туртакан вăй пур пек туйăнать. Вулавăшра та чăваш писателĕсен пĕр кĕнеки те вуламасăр юлмарĕ пулĕ. Çĕнĕрен килнĕ кĕнекесемпе те кăсăклансах тăратăп. Тантăшсемпе мĕн пĕчĕкрен урам вăййисене выляса ӳснĕ, ахаль карталанса кăна мар, сăвă каласа:

Хĕвел, хĕвел, хĕвел, тух,<br>
Хĕветĕре курма тух,<br>
Хĕветĕре пулмасан,<br>
Хĕвеклана курма тух.

Хĕллехи вăрăм каçсенче алла кĕнеке тытса аттепе аннене нумай чăвашла кĕнеке вуласа панă. Анне, алă ĕçĕ тунă май, тимлĕн итлетчĕ. Тепĕр чух шухăша та путатчĕ, е куççуль тухнă самантсем те пулнă. Халĕ те çак ырă йалана пăрахмастăп, кăшт вăхăт пулсанах алла кĕнеке е хаçат тытатăп. Чăвашла тухакан хаçат-журналпа туслă пирĕн çемье. «Самант» - манăн юратнă журнал, «Тантăш» хаçата шăллăм питĕ килештерет. «Тетте» журналпа ача садне çӳрекен йăмăк интересленет. Анне «Чăваш херарăмĕпе» туслă. Атте «Кил-çурт, хушма хуçалăх» хаçатсăр пурăнаймасть. Районта тухса тăракан «Ял пурнăçĕ» пурне те интереслентерет.

Чăваш чĕлхи питĕ çемçе те ачаш чĕлхе. Çавăнпа та и тен, хула ачисем те яла килсен чăвашла калаçма вĕренесшĕн. Хăш-пĕр чăваш çемьйисенчех ачасене мĕн пĕчĕкрен вырăсла вĕрентсе ӳстерме тăрăшаççĕ. Ача вара шкул çулне çитсен пысăк йывăрлăха кĕрсе ӳкет: вырăсла та «пиçмеç», чăвашла та пулсах каймасть.

«Хăйне хисеплекен кирек мĕнле халăх та хăйĕн тăван чĕлхине пысăк пуянлăх вырăнне хурса хаклать», - тенĕ чăвашсен профессорĕ Михаил Сироткин. Чăваш чĕлхи чăнах та вăйлă аталаннă, кăйкăр пек тĕреклĕ çуначĕсене сарса çӳле вĕçнĕ, Андриян Николаев ăна космоса çити хăпартнă. Чăваш сăмахĕ, чăваш юрри пĕтĕм тĕнчипе янăрать. «Чăваш çынни санпала, ытарайми чĕлхемĕр, хăйĕн йышне усранă, синкер килнĕ сехетре юман пулса юрланă, вирт çӳрекен вăхăта йăмра пулса йăпатнă, тӳлек тăран каçсенче саркайăк пек сас панă, илемлĕхне те сиплĕхне, ĕмĕрхи техĕмлĕхне, ĕмĕрхи çепĕçлĕхне, тараватвашаватне, иксĕлми пархатарне уртмахĕнче упранă», - тет Чăваш халăх поэчĕ, пирĕн ентеш Юрий Сементер. Чăн та, чăваш чĕлхине темиçе ĕмĕр хушши халăх шăратнă, çавăнпа та пулĕ чăваш чĕлхи пуян илемлĕ, янравлă та çепĕç, паха та асамлă. Вăл чăваш юрри пек янаравлă та кĕвĕллĕ, унпа чуна ачашлама е амантма, çĕклеме е ӳкерме, хавхалантарма, çунтарма пулать. Тĕрĕсех калаççĕ пуль çав, çын чунĕ чĕлхинче палăрать, тесе. Вырăссен паллă писателĕ Константин Паустовский çапла калать: «Çын хăй чĕлхине мĕнле хисепленине» кура унăн культура шайĕ пирки çеç мар, гражданин пахалăхĕ пирки те тĕп-тĕрĕсех калама пулать. Тăван чĕлхӳне юратмасăр, хăвăн çĕршывна чăнласа юратаймăн».

Мана тăван чĕлхе хама хам çын пек туйма кирлĕ. Уйрамах республикăран инçерех кайсассăн вара чăваш чĕлхишĕн тунсăхлама пуçлатăн, чăвашла калаçнине илтсен чун-чĕререн хĕпĕртесе каятăн. Тăван чĕлхе атте-анне пекех, эпир суйламастпăр ăна. Вăл хăй суйласа илет пире. Амăш чĕлхине сума суман çын-намăссăр. «Пирĕн икĕ тăван чĕлхе, пĕри-вырăс, тепри-чăваш чĕлхи», - теме пăрахмастпăр. Никамăн та тăван чĕлхе иккĕ те, виççĕ те пулма пултараймасть. Анне сĕчĕпе кĕнĕ чĕлхе пĕрре кăна! Пĕрре кăна.

Тăван чĕлхене лайăх пĕлекен ытти чĕлхене те хисеплет. Тăван Çĕр шыва юратасси те тăван чĕлхерен пуçланать вĕт.

Чăваш чĕлхи-халăхăн ĕмĕр сӳнми ăс-тăн чечекĕ. Чăваш халăхне çутта кăларакан И.Я. Яковлев хайĕн халалĕнче çапла çырса хăварнă: «Туссем, тăвансем, ытарайми чăваш çыннисем! Эсир хăвăр халăхăрăн чĕлхинчен ютшăнмасан, халăх кăмăлĕ пĕтĕмпех сирĕн аллăрта пулĕ».

Халĕ вара пирĕн вĕрентекенĕмĕр ĕçне малалла туса пымалла, тăван чĕлхене аталантармалла, тĕпчемелле, упрамалла.

*Красноармейски районĕнчи*<br>
*Чадукаси тĕп пĕлӳ паракан шкулĕ.*<br>
*Авторĕ: Иванова Алина 9 класс*<br>
*Вĕрентекенĕ: Григорьева А.Н.*